ХЫПАР

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1 (901) №, 2017, кăрлач/январь, 12 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/кăрлачăн 11-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧАÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 17-20 |
| Купăста | 14-16 |
| Пекин купăсти | 85 |
| Сухан | 20-25 |
| Кишĕр | 20-25 |
| Ыхра | 200-300 |
| Хăяр | 60-120 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 60-150 |
| Пылак пăрăç | 80-150 |
| Кавăн | 30 |
| Тăварланă хăяр | 100-120 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 55-120 |
| Исĕм çырли | 55-130 |
| Апельсин | 70-125 |
| Лимон | 150-200 |
| Банан | 50-70 |
| Мандарин | 65-120 |
| Груша | 75-100 |
| Кĕтмел çырли | 180 |
| Шур çырли | 170 |
| Сырлан | 150 |
| Хурма | 65-95 |
| Палан | 50 |
| Шăлан | 200 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 29 |
| Хуратул -»- | 69-86 |
| Тулă -»- | 34 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 48-55 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 45 |
| Пыл | 400-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-320 |
| Сурăх ашĕ | 180-320 |
| Пĕвер | 160-200 |
| Салă | 100-150 |
| Кăркка | 400 |
| Кролик | 350 |
| Хур, индоутка | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 52-70 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 180-200 |
| -»- сельдь | 200 |
| Мойва | 200 |
| Минтай | 140-170 |
| Треска | 260 |
| Шăла пулă /судак/ | 170-300 |
| Çупах /лещ/ | 100 |
| Карп | 250 |
| Çуйăн /сом/ | 350 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 35-40 |
| Хăйма | 100-120 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 250-300 |



## Лимон ӳстерсе пăхар-и?

**Лимон касăкĕ хушнă чей тутлăрах кăна мар, сиплĕ те иккенне пурте пĕлеççĕ. Туяннă лимонăн касăкне чейе чăмтарнă майăн тухнă вăррине чӳрече янаххи çинче ларакан чечек куршакне чиксе çитĕнтерекен те сахал мар пирĕн хушăра. Манăн килте те пĕр тĕп çитĕнет. Ачасем те мандарин, те апельсин вăррисене чиксе хунă та чечексемпе юнашар, 5-6 куршакра шăтса тухнăччĕ. Хăйсем асăрхиччен чылайăшне тăпăлтартăм. Пĕрне вара шеллерĕм, ачасемшĕнех хăварас килчĕ. Чечекне урăх çĕре куçартăм, пĕр çултаlăкран лимон хунавне те пысăкрах куршака куçарса лартрăм, çитĕнет-ха, 4 çул иртрĕ.**

Анчах пасарта лавккара туяннă лимона пӳлĕмре çитĕнтерсе çимĕç илме кăткăсрах. Вĕсене пысăк лаптăк кирлĕ, çимĕçне те часах кĕтсе илеймĕн.

Пӳлĕмре çитĕнтермелли сортсем сахал мар. Вĕсене ятарласа куршакра çитĕнтерме селекциленĕ. Çӳллĕшпе пысăк мар, çимĕçне те хăвăртрах пама пуçлаççĕ.

Çимĕç нумай паракан пирĕн тăрăхра пӳлĕмре ӳстерме юрăхлă лимон сорчĕсем: **Пандероза, Лунарио, Лисбон, Мейера, Курский, Новогрузинский, Павловский.**

Килте лимон ӳстермешкĕн çителĕклĕ çутă, уçăлтаракан пӳлĕм, кăпка тăпра, тĕрĕс шăварни, апатлантарни кирлĕ. Хĕлле – уçăрах вырăн. Лимон – субтропик ӳсен-тăранĕ, çуллахи вăхăтра та ăна ытлашши шăрăх кирлĕ мар. Пӳлĕмри лимона лайăх аталанма çулла – 20-25 градус, хĕлле 10-14 градус ăшă çителĕклĕ. Çулла лимон куршакне ирĕке, хĕвел ытлашши çапман вырăна кăларса лартма юрать.

**Лимон çутă юрататъ.** Хĕвелтухăç, кăнтăр хĕвеланăç еннелле тухакан чӳречесен умĕнче пулсан аван. Хĕллехи вăхăтра çутă çитмест, хушма çутăпа тивĕçтермелле, çутă вăхăтне 12 сехете тăсмалла. Асăнса хăварар: ахаль лампочка çути ӳсен-тăраншăн усăсăр. Светодиотлă, люменисцентлă лампăсен çутин спектрĕ ӳсен-тăрана юрăхлă.

**Тăпра кăпка, сывлăш, нӳрĕк лайăх яраканни кирлĕ.** Çак виçепе хатĕрлеме пулать: пĕр пай лайăх çĕрнĕ тислĕк, пĕр пай пахча тăпри, кăштах хăйăр, йывăç кĕлĕ, кăмрăк. Дренаж валли куршак тĕпне вĕтĕ чул е кирпĕч тĕпренчĕкĕ, тепĕр сий хăйăр сармалла.

**Çуллахи вăхăтра,** лимон ӳснĕ чухне, **тутлăхлă япаласемпе** /минераллă удобренисемпе/ **уйăхра 2 хутчен шăвармалла.** Юпа уйăхне кĕрсен удобрени пама пăрахмалла. Çулла кунсеренех, кĕркунне сайрарах шăвармалла. Ытлашши нӳрĕке те, тăпра типсе кайнине те чăтаймасть.

Лартнă чухне хунава пĕчĕк куршак та çителĕклĕ. Çитĕннĕçемĕн пысăкрах савăта куçарса пымалла. Çĕнĕ савăт диаметрĕпе унччченхинчен 5-6 см пысăкрах пулмалла. Вулă тымарланнă тĕле /корневая шейка/ тăпрана антарма юрамасть.

**Лимона сапансемпе ĕрчетмелле.** Çуркунне тĕме сайратса касмалла, туратсене 3-4 папка хăварса кĕскетмелле, вăл 10 см яхăн пулмалла. Уйрăм куршака лартса тымарланма пулăшакан препаратпа шăвармалла, çиелтен пластик савăтпа хупласан пĕчĕк панча пек пулать. Лимона вăрăран та ӳстерме пулать, анчах кун пек чухне вăл хăвăрт çимĕç памасть. 12-14 çултан çеç çимĕçе тутанса пăхма май килĕ. Унсăр пуçне вăрăран çитĕнекен тĕмĕн сорт пахалăхĕ улшăнма пултарать. Сапанран лартса ӳстерсен вăл 4-5 çултан çимĕç паракан пулать.

**Лайăх пăхсан лимон вăрах чечекленет.** Сивĕрех çĕрте хĕл каçарнă лимона çуркунне ăшă вырăна куçарса лартмалла, унăн çамрăк çулçăсем, чечек папкисем тухаççĕ. Лимон чечекĕ улмуççин евĕрлĕрех, 3 см диаметрлă, 5 çеçкеллĕ. Папкасем 17-18 градусра çурăлма пуçлаççĕ. Чечексем хăй тĕллĕн шăркаланаççĕ. Шăркаланнă хыççăн çимĕç тытăнать, вăл 6-12 уйăха яхăн ӳссе аталанать, пиçет.

Пӳртри ытти ӳсен-тăран сăтăрçисем лимона та сиенлеме пултараççĕ. Сăвăс, шăна, ӳсен-тăран пыйти, щитовка ересрен асăрханмалла. Килти курăк-чечеке тĕрĕслесех тăмалла.

**Лимон тĕмне формăласси.** Лартнă сапана тымарланнă хыççăн уйрăм куршака куçармалла. Вăл пĕр çул ӳссе 35-40 см çитĕнет. Тĕп вулăна 30 см хăварса тăррине касмалла. Çакă тĕме туратланма май парать. Пĕрремĕш çимĕçсем 4-мĕш ретри туратсем çинче тытăнма пуçлаççĕ. Çавăнпа тĕмĕн хапине тĕрĕс тата вăхăтра йĕркелемелле.

Паллах, килте çитĕнтернĕ пĕр лимон тĕмĕ килйыша паха çимĕçпе тивĕçтермелĕх тухăç параймасть. Анчах хамăр алăпа çитĕнтернĕ çимĕç темрен те паха. Вăл пӳлĕме сăн кĕртет, хăтлăх, ăшăлăх кӳрет.

### Лимон çинчен

- Пĕр лимонра – этем организмне куллен кирлĕ С витаминăн 1/3 виçи.
- Ĕлĕк лимон сĕткенне шывпа хутăштарса питкуçа, алăсене çунă. Çапла майпа инфекци чирĕсенчен хӳтĕленнĕ. Лимон сĕткенĕллĕ шыва ĕçни холерăран сыхланма та пулăшать.
- Лимон хуппипе шăл тунисене сăтăрни çăвар ăшчикне, шăл тунине сиплет.
- Пиçсе çитнĕ лимон йӳçенкĕ, анчах ырă шăршăллă. Пирĕн пата чылай чухне пиçсе çитменнине илсе килеççĕ. Шел те, вĕсен усси пулса çитнĕ лимонсенчен сахалрах.
- Апат тăварлăрах пулчĕ тĕк унта тӳрех шыв хушма ан васкăр. Лимон сĕткенĕпе кăштах пĕрĕхĕр. Апат тути лайăхланĕ.

**Эльвира ИВАНОВА.**

## Халăх сăнанинчен

Кăрлач уйăхĕнчен çĕнĕ акана, пахча ĕçне хатĕрленме пуçлатпăр. Çу мĕнле пулассине, ытларах хăш енĕпе тимлемеллине халăх хĕлĕпех сăнаса палăртса хунă. Çырăва вĕренсен календарьсем çине çырсах палăртнă. Хутла пĕлмен чухне сăмах вĕççĕн ăруран-ăрăва куçса пынă сăнав-тĕпчев меслечĕсем.

- Хĕлле юр нумай пулсан çулла çумăрлă пулĕ. Хĕлле сивĕ пулсан, çулла – шăрăх.
- Хуралтă тăррисенчен çакăнса тăракан тумла пăрĕсем нумай-и – çулла пахчаçимĕçĕпе, тыр-пулпа тулăх пулĕ.
- Кăрлач пуçламăшĕнчи сивĕсем çулла шăрăх пуласса систереççĕ.
- Çак уйăх ăшă – çуркунне кая юлса килет.
- Кăрлачăн 14-мĕшĕнче тĕтреленсен тыр-пул ăнса пулĕ.

## Витĕр çилтен

Вите стенисем хулăн пулсан та чӳрече пĕр хутлă кăна тăк, алăк тачă хупăнмасан унта çил вылять, ăшă тытăнса тăмасть. Витĕр çил вĕрни витери чĕрчунсемшĕн питĕ сиенлĕ. Кайăк-кĕшĕк те, ытти шултра выльăх та чирлесе кайма пултарать.

Вите çĕнĕ чухне чӳрече хашакĕсем чӳрече суллине, стенана тачă çыпçăнса тăраççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн хашаксем шултăркаççĕ. Чӳрече пĕр хут кăна пулсан, витере çителĕклĕ ăшă мар тăк, чӳречене икĕ хут лартни вырăнлă.

Алăк тачă хупăнмасть тăк малтан сăлтавне тупăр. Алăк тăпси хĕсĕнмест-и, анман-и? Алăка ăшă материалпа сăрмалла, лайăх хупăнакан тумалла.

Ăшă, çутă çителĕклĕ витере выльăх-чĕрлĕх сывă çитĕнет, хăвăртрах аталанать. Унран продукци илесси те ӳсет. Чăхсем витере +10...+12 градус ăшă, çутă çителĕклĕ пулсан çăмарта тума нарăс уйăхĕнчен пуçлаççĕ.

Вите маччи çӳхе мар-и? Унта утă-улăм управра выртсан мачча ăшă тытать-ха. Утăна выльăх валли илнĕçемĕн маччана ăшă материалпа витме ан манăр. Мачча тăрне кивĕ улăм сарма юрать.



## Вулакансем ыйтнипе

# Пирус туртма пăрахасчĕ

**Тапак туртассинчен хăтăлма мĕнле курăк е эмел пулăшать-ши? Туртнин сиенĕ çинчен çырсан та аванччĕ.**

АГАФЬЯ.
Тăвай районĕ.

Чĕлĕм туртнин сиенĕ пирки туртакансем хăйсем те аван пĕлеççĕ, анчах пурнĕрех çак усал йăларан хăпаймаççĕ. Мĕншĕн?

Туртаканăн психологийĕпе тата организмра пулса иртекен хими реакцийĕсен хăнăхăвĕпе çыхăннă вăл. Чи малтанах туртма пăрахмашкăн çирĕп тĕллев пулмалла тата тĕрĕс хатĕрленмелле. Çак вăхăтра организма пулăшакан, çăмăллăх кÿрекен япаласем пулмалла. Никотин хăнăхăвне чакарма «Цититон», «Анабазин», «Зибан», «Табекс» тÿмеллĕ эмелсем, никотинлă пластырь пулăшать. Сăмсана пĕрĕхмелли «Никон» спрей лайăх. Вĕсем организма сигаретран килекен никотина ылмаштарма пулăшаççĕ.

Пирус тĕтĕмĕнче сиенлĕ япала нумай: сероводород, никотин, углекислород, аммиак, бензпирен, азот, йÿçек эфир çăвĕсем. Туртнинчен чи вăйлă сиенленекен орган – ÿпке. Чĕре, юн тымарĕсем, пуç мими, нерв тытăмĕ, пĕвер, арлăх, вар-хырăм тата ытти органсене сиенлет вăл. Туртакан çыннăн ÿт тĕсĕ те улшăнать, çăвар ăш-чикĕ япăхать. Шăл туни сиенленет, шăлсем сарăхаççĕ.

Ăсчахсем çирĕплетнĕ тăрăх сигарет туртнă хыççăн 2 сехетрен сирĕн каллех туртас килет тĕк, 12 сехетрен вара сывлама çăмăлланать, организмран углекислород тухать, икĕ кунран шăршă туясси, апат тутин сисĕмĕ лайăхланать, 3 уйăхран чĕре, юн çаврăнăш ĕçĕсем лайăхланаççĕ, ÿпке çĕнелме пуçлать, инфаркт, инсульт хăрушлăхĕ сахалланать.

Чĕлĕм туртнинчен хăтăлма халăхра усă куракан меслетсем.

**Сĕлĕ.** Çур стакан сĕлĕне 1,5 литр вĕрекен шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче çур сехет вĕретмелле, унта 1-2 апат кашăкĕ календула чечекĕ хушмалла та тепĕр 5 минут вĕретмелле. Çулăм çинчен илсен алшăллипе хуплаçа пĕр сехет лартмалла, сăрăхтармалла. Кунне 3-4 хутчен çуршар стакан ĕçмелле. Туртас килсен пĕрер сыпкăм тумалла, çăвара чÿхемелле. Туртас килни иртĕ.

**Çĕмĕрт, аир курăкĕ.** Туртас килни сисĕнме пуçласанах пĕчĕк шăрпăк пĕрчи пек çĕмĕрт туратне е аир тымарĕн касăкне чăмламалла. Кун хыççăн туртас килни иртет. Сигарет хыпсан та хăсас килĕ.

**Эвкалипт.** Пĕр апат кашăкĕ вĕтетнĕ эвкалипт çулçине пĕр стакан вĕрекен шыва ямалла, çулăм çинчен илсе пĕр сехет хуплаçа лартмалла. Унтан сăрăхтармалла та пĕр апат кашăкĕ пыл, глицерин хушмалла. Кунне 5-7 хутчен 50 грамм /чĕрĕк стакан/ ĕçмелле. Пĕр уйăха яхăн сипленнĕ майăн туртассинчен вуçех хăтăлма пулĕ.

**Апат соди.** Пĕр апат кашăкĕ апат содине пĕр стакан шыва ярса пăтратмалла. Туртас килсен кашнинчех çăвара чÿхемелле.

**Чăрăш тăрри курăкне,** вĕлтрене, сысна курăкне /спорыш/ пĕрер апат кашăкĕ илмелле, çур литр вĕрекен шыва ямалла, çулăм çинчен тÿрех илмелле те хуплаçа пĕр сехет лартмалла. Апат хыççăн 60-70 грамм кунне 3-4 хутчен ĕçмелле.

# Нÿхрепри çанталăк

Нÿхрепе кĕрсе унти «çанталăк» мĕнлине сăнăр. Чылай пахчаçимĕç валли +1...+3 градус ăшă кирлĕ, нÿрĕклĕх – 85-90%. Нÿхрепри температура −1,5 градуса çити чаксан панулми шăнма пуçлать.

Çĕрулми, кăшман, кишĕр, ытти тымар çимĕç çеçке кăларма пуçланă тăк татса пăрахмалла. Çакă тымар çимĕç шанса пĕркеленессинчен упрĕ. Пахчаçимĕçе тĕрĕслемелле, çĕрме пуçланă çимĕçсене илмелле.

Йÿçĕтнĕ, тăварланă пахчаçимĕç савăчĕсене те тĕрĕслемелле. Кăвакарнă, пăнтăхнă лаптăксене пуçтарса илмелле. Савăт хупăлчисене, йывăрлăхĕсене пăнтăхран тасатмалла.

# Кулăш

Ача садĕнче Çĕнĕ çул уявĕ вăхăтĕнче:

– Хĕл Мучи, парнешĕн тавах!
– Темех мар-çке, темех мар.
– Эпĕ те çаплах шутлатăп, анчах анне пурнĕр тав тума хушрĕ.

* * *

Чăрăшсем сутакан пасарта:
"Ылă çыннăм, ас ту: камăн килĕнче искусственнăй чăрăш, çавăн патне суя Хĕл Мучи суя парнесемпе пырать".

# Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле | | Кун тăршшĕ | | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 12.01 | – 5 | – 11 | | 12.01 | 7.28 | 14 у.к. |
| 13.01 | – 4 | – 10 | | 13.01 | 7.31 | 15 у.к. |
| 14.01 | – 4 | – 6 | | 14.01 | 7.33 | 16 у.к. |
| 15.01 | – 5 | – 7 | | 15.01 | 7.36 | 17 у.к. |
| 16.01 | – 8 | – 15 | | 16.01 | 7.40 | 18 у.к. |
| 17.01 | – 12 | – 16 | | 17.01 | 7.43 | 19 у.к. |
| 18.01 | – 13 | – 18 | | 18.01 | 7.46 | 20 у.к. |

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 46 минут пулать, 50 минут хушăнать.**
**Кăрлачăн 12-мĕшĕнче уйăх тулать, кивелме пуçлать.**

# Хĕллехи садра



**Хĕлле пахчара мĕн тумалла, йĕри тавра шурă юр выртать тесе шухăшлакансем йăнăшаççĕ. Пысăк çăматă тăхăнса улмуççи-груша, чиехурлăхан, ытти тĕмсем патне тухса пăхма сĕнетпĕр. Уяр çанталăкра çара туратсем йăлтах курăнаççĕ. Кĕсен-çурăк, мăк-лишайник, хăрăк-çĕрĕк самаях асăрхама пулать унта.**

Йывăççсем çинчи эрешмен карти евĕрскерпе каркаланнă çулçăсем çук-и? Çакнашкал çулçăсем – сиенлĕ кăпшанкăсен йăвисем. Çавăнпах хăрнă çулçăсем татăлса та ÿкмеççĕ. Тĕмсем, йывăççсем çинчи типсе хăрнă çĕрĕк çимĕçсене те пуçтармаллах. Вĕсенче тĕрлĕ йышши çĕрĕк чирĕсен спорисем, хура рак чирĕн вирусĕсем хĕл каçаççĕ. Йăлтах пуçтарса витрене хурăр, çунтарса ярăр. Кăмпа спори тислĕке хурсан та çĕрсе пĕтмест.

Çÿлти хăрăксене татма шăчă пулăшать. Ун вĕçне пăралук ершик е тимĕр татки çирĕплетсе хумалла çеç.

Çĕр çумĕнчерех, йывăç вуллин çурăкĕсенче, йывăç карта, вут-шанкă çинче, хуралтă çумĕнче, хыт-хура, çÿп-çап çинче сарăрах сăрă тĕслĕ 2-3 см диаметрлă кăпăшка /бархат евĕр/ пĕчĕк «минтерсем» çыпăçса тăмаççĕ-и? Вĕсем сиенлĕ шелкопряд лĕпĕшĕсен /хурчĕсен/ çăмартисем. Вĕсене те хырса илмелле, тĕп тумалла.

Çамрăк туратсене тимлесе пăхса тухăр. Вĕсем çинче вĕтĕ сарăхĕрлĕ тĕслĕ çăмартасем çыпçăнса тăмаççĕ-и? Панулми хурчĕн нăррин /медяница/ çăмарти вăл. Çуркунне чечек çурма пуçласанах çăмартаран вĕтĕ хуртсем тухаççĕ те пулас панулмие тапăнаççĕ.

Бисер шăрçи евĕрлĕ йăлтăрка çăмартасем те çамрăк туратсем çинче хĕл каçаççĕ. Вĕтĕ шăрçа пек турат çинче явăнса тăраççĕ сиенлĕ кăпшанкă çăмартисем. Секаторпа турата касса илсе каллех кăвайта яма тивет.

Хĕлле, ытти ĕç сахалрах чухне, сада тимлĕ пăхса тухни çулла пахарах, нумайрах çимĕç илме май парĕ.

# Кайăксене пулăшу кирлĕ



Хĕлле кайăксене апат пама ан манăр. Кайăксене сыхласа хăварни çулла пахчаçимĕç, улмаçырла тулăхрах туса илме май парать. Кăсăя – питĕ усăллă кайăк. Пĕр мăшăр кăсăя çу каçиччен вăтамран хĕрĕх йывăçа хурт-кăпшанкăран тасатса тăрать. Вĕсем хăйсен чĕпписене хурт-кăпшанкăпа çеç тăрантарса çитĕнтереççĕ. Çырла-çимĕçе тапăнмаççĕ.

Шел те, çак кайăксем хĕлле питĕ нумай вилеççĕ. Шăнса мар, шăпах апат çитменнипе. 100 кайăкран çуркуннеччен10-12 çеç юлнине çирĕплетеççĕ орнитологсем.

Пĕчĕк ĕçченсене тĕрлĕ мелпе выçăран хăтарма пулать. Вĕсем хаваспах хĕвелçаврăнăш сăхаççĕ, урпа, тулă кĕрпине те тиркемеççĕ.

Чи лайăххи вара – салă. Сыснан тир çумĕнчи çуне çеç мар, кирек мĕнле выльăхăн ăш çăвне те кайăксене пама юрать. Çакăн валли ятарласа сырăш хатĕрлеме те кирлĕ мар. Выльăхăн тăварламан çăвне /шăнăрлăрах какай татки те юрать/ çирĕп çиппе явакласа çыхмалла та çуртран аяккарах сад-пахчана е вăрман, раща, е çырма-çатра хĕррипе ÿсекен йывăçсен турачĕ çине çакса хума юрать. Çакăнса тăракан çу чĕркемĕ кайăк ларсан силленет. Чылай кайăк силленсе тăракан чăмакка çине ларса апатланма хăрать, кăсăя вара урисемпе тытăнса пуçхĕрлĕ тăрса та апата сăхать.

Халĕ чылай çын выльăхăн ăшри çăвĕпе усă курмасть. Ăна ахалех кăларса пăрахаççĕ е йыта параççĕ. Кайăксем хăйсене манманшăн çуркунне тав туса юрă шăрантарĕç, çулла сад-пахчана сăтăрçăсенчен тасатĕç.

# Техĕмлĕх курăкĕсем



**Ажгон** – сунчăк евĕрлĕ тăрăллисен /укроп, петрушка/ йышĕнчен. Техĕмлĕх валли вăррине пуçтарса типĕтеççĕ. Унăн тăван çĕршывĕ – Африка. Азири ăшă çĕршывсенче çитĕнтереççĕ. Индире, пирĕн пахчасенче укроп пекех, кашни хуçалăхрах ÿсет. Вĕтĕ вăрăллă ажгон чи техĕмли шутланать. Вăрра ал лаппи çине хурса сăтăркаласан техĕмлĕ шăршă тухать. Вăтам Азири çĕршывсенче аш-какай, пахчаçимĕç, пулă апачĕсем хатĕрленĕ чухне ажгон хушаççех. Плова, бастурмана ажгон ярсассăн уйрăмах техĕмлĕ пулать.

Ажгона медицинăра усă кураççĕ. Вăл вар-хырăм ĕçне лайăхлатать, пÿре, шăк хăмпи чирĕсем чухне шăк хăвалама пулăшать. Спиртлă настойка – вăйлă антисептик. Вăл ăшри паразитсене /шĕвĕрĕлченсене/ пĕтерет, ÿслĕке çемçетет. Çамрăк курăкăн çулçине салата, яшкана, ытти апат-çимĕçе хушаççĕ. Унăн тути укроппа энĕç курăкĕн евĕрлĕрех, кăшт хĕрхÿрех. Ажгона техĕмлĕх сутакансенчен туянма пулать. Вăрă хальлĕн, авăртманнине, туянсан аванрах. Унăн техĕмĕ вăйлăрах.



**Сумах.** Сумак тесе те калаççĕ. Ку ÿсентăрана та ытларах Вăтам Ази çĕршывĕсенче çитĕнтереççĕ. Ăна тепĕр чухне уксус йывăççĕ тесе те калаççĕ. Унăн çулçинче хуппинче хытаракан веществосем пур. Унпа авал пир-пусма пĕветме, тирсăран тума усă курнă. Вăррине техĕмлĕхĕшĕн пуçтарса типĕтеççĕ. Тĕрлĕ йÿçеклĕх пуррине кура унпа шашлăк маринадне хатĕрлеççĕ, апат-çимĕçе тутă кĕртме яраççĕ. Аш-пăш, пулă, салат, пахчаçимĕç апачĕсене хушаççĕ. Лимон сĕткенĕпе е уксуспа ылмаштарма пулать. Ботаниксем сумакăн 250 тĕсне палăртаççĕ. Апат хатĕрлемешкĕн юрăхли вара пурĕ те 5-6 çеç.

Халăх медицининче сумака диарейăран, ревматизмран, подагрăран, шăнса пăсăлсан сипленме усă кураççĕ. Типĕтсе авăртнă сумака шывпа хутăштарса чÿхени шăл туни шыççан пулăшать, сумак отварĕ цингаран, тĕрлĕ шыçăсенчен хÿтĕлет. Тĕмĕн вăррине, хуппипе çулçине ÿт-тир чирĕсенчен сипленмелли маçсем хатĕрлеме усă кураççĕ.

## Тĕпелте чухне

# Сийленĕ çĕрулми

Çак рецептпа çĕрулмине тĕрлĕ сăлтавпа хатĕрлеме пулать. Уяв валли те, кулленхи апата та лайăх вăл.

**Кирлĕ пулать: 10 вăтам çĕрулми. 3-4 сухан, какай – çур кило /Аăх е пăру, çисен какайĕ юрать, килĕштернине кура/, сыр – 300 г, майонез – 400 г, тăвар, техĕмлĕхсем, ешĕл çимĕç.**

Сухана çурма çавран тураса майонезпа пăтратса лартатпăр. Çĕрулмине тăрăхлан тураса майонезпа пăтрататпăр, тăвар, техĕмлĕхсем яратпăр. Пĕр сехетрен вĕсене йăлтах противень çине сийлесе хуратпăр. Малтан – çĕрулми, унтан – сухан, какай. 220 градуса çити хĕртсе хатĕрленĕ духовкăна лартса 40-50 минут пĕçеретпĕр. Унтан духовкăран кăларса хырса хатĕрленĕ сырпа витетпĕр, ешĕл çимĕç сапатпăр. Сыр ирĕлсен апат хатĕр!

# Пекин купăстипе

Пекин купăстипе чăхран салат хатĕрлеме ансат тата вăл питĕ тутлă пулать. Ăна ахаль чухне çиме те, уявсенче сĕтел çине лартма та аван.

**Кирлĕ пулать: пĕр вăтам пекин купăсти, пĕр банка куккурус, 3 çăмарта, чăхăн шурă какайĕ, майонез.**

Купăстана çинçен туратпăр, куккуруса уçса салат савăтне яратпăр, чăмăрла пĕçернĕ çăмартана шуратса тĕпрететпĕр. Пĕçернĕ чăх какайне алăпа чĕллĕнчĕллĕн уйăрса яратпăр. Мĕнпур çимĕçе хутăштарса майонезпа пăтрататпăр.

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА кӑрлач, 16-22

## 16 тунтикун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.20, 4.25 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.25 Модный приговор
12.15 «Про любовь» 16+
13.20, 14.15, 15.15, 0.35 «Время покажет» 16+
16.00, 2.25, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.15 Ночные новости
23.30 «Городские пижоны» «Бюро» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «ВАСИЛИСА» 12+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
23.50 Т/с «САША ДОБРЫЙ, САША ЗЛОЙ» 12+
1.50 «Городок» Лучшее
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чӑваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05, 7.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 7.00, 8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Х/ф «БРАТАНЫ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ПАУТИНА» 16+
23.30 «Итоги дня»
0.00 «Поздняков» 16+
0.10 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.10 «Место встречи» 16+
3.05 Т/с «ШЕРИФ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30 Т/с «ЖЕНСКАЯ ЛИГА» 16+
8.00 «Экстрасенсы ведут расследование» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.30, 0.10 «Дом-2. Свадьба на миллион» 16+
11.30, 12.00, 12.30, 13.00, 13.30, 14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30 Т/с «УНИВЕР. НОВАЯ ОБЩАГА» 16+
20.00, 20.30 Т/с «ГРАЖДАНСКИЙ БРАК» 16+
21.00, 4.00 Х/ф «Я, СНОВА Я И ИРЭН» 16+
23.10 «Дом-2. Город любви» 16+
1.15 Т/с «ТАКОЕ КИНО!» 16+
1.45 Муз/ф «РАДОСТНЫЙ ШУМ» 12+
6.20 Т/с «САША+МАША» «ДЕНЬ РОЖДЕНИЯ МАМЫ (ТЕЩА ВЛЮБИЛАСЬ)» 16+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Паттӑрсен ҫулĕпе**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Жемчужина Поволжья**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Ҫула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Ҫĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Библия сегодня**
**18.39 Каҫхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 17 ытларикун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.20, 4.25 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.25 Модный приговор
12.15 «Про любовь» 16+
13.20, 14.15, 15.15, 0.35 «Время покажет» 16+
16.00, 2.25, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.15 Ночные новости
23.30 «Городские пижоны» «Бюро» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «ВАСИЛИСА» 12+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
23.50 Т/с «САША ДОБРЫЙ, САША ЗЛОЙ» 12+
1.50 «Городок» Лучшее
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чӑваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Утренний гость. Премьера (на чувашском языке)**
**9.25-9.55 Секреты здоровья и красоты**
**11.40-11.55 Вести-Чӑваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чӑваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05, 7.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 7.00, 8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Х/ф «БРАТАНЫ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ПАУТИНА» 16+
23.30 «Итоги дня»
0.00 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.00 «Место встречи» 16+
2.55 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.20 Т/с «ШЕРИФ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30 Т/с «ЖЕНСКАЯ ЛИГА» 16+
8.00 «Экстрасенсы ведут расследование» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.30 «Дом-2. Свадьба на миллион» 16+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Имею право**
**6.31 От 2 до 5**
**6.36 Пĕр сӑвӑ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрӑ саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тӳсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрӑ ҫаврӑмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Ҫĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каҫхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 18 юнкун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.20, 4.25 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.25 Модный приговор
12.15 «Про любовь» 16+
13.20, 14.15, 15.15, 0.35 «Время покажет» 16+
16.00, 2.25, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.15 Ночные новости
23.30 «Городские пижоны» «Бюро» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «ВАСИЛИСА» 12+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
23.50 Т/с «САША ДОБРЫЙ, САША ЗЛОЙ» 12+
1.50 «Городок» Лучшее
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чӑваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Рождественская елка. Премьера**
**9.30-9.55 Чебоксарские адреса**
**11.40-11.55 Вести-Чӑваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чӑваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05, 7.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 7.00, 8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Х/ф «БРАТАНЫ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ПАУТИНА» 16+
23.30 «Итоги дня»
0.00 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.00 «Место встречи» 16+
3.00 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.20 Т/с «ШЕРИФ» 16+

### ТНТ
7.00 Профилактика на ТНТ
14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30 Т/с «УНИВЕР. НОВАЯ ОБЩАГА» 16+
20.00, 20.30 Т/с «ГРАЖДАНСКИЙ БРАК» 16+
21.00, 2.55 Х/ф «ЧЕГО ХОЧЕТ ДЕВУШКА» 12+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.27 Хамӑр ял**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Диалоги о школе**
**7.38 Права потребителя**
**7.43-8.00 Кӑмӑлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 Самое время. Прямой эфир**

* * *

**18.10 Ҫĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Каҫхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 19 кӗҫнерникун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.20, 4.25 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.25 Модный приговор
12.15 «Про любовь» 16+
13.20, 14.15, 15.15, 0.35 «Время покажет» 16+
16.00, 2.25, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.00 Вечерние новости
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА». 16+
23.15 Ночные новости
23.30 «Городские пижоны» «Бюро» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «ВАСИЛИСА» 12+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ». 12+
23.50 Т/с «САША ДОБРЫЙ, САША ЗЛОЙ» 12+
1.50 «Городок» Лучшее
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чӑваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Вспомни, солдат. Премьера (на чувашском языке)**
**9.15-9.55 Двери в детство. Видеофильм**
**11.40-11.55 Вести-Чӑваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чӑваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05, 7.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 7.00, 8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Х/ф «БРАТАНЫ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ПАУТИНА» 16+
23.30 «Итоги дня»
0.00 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.00 «Место встречи» 16+
2.55 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА» 16+
3.20 Т/с «ШЕРИФ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30 Т/с «ЖЕНСКАЯ ЛИГА: ПАРНИ, ДЕНЬГИ И ЛЮБОВЬ» 16+
8.00 «Экстрасенсы ведут расследование» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.30 «Дом-2. Свадьба на миллион» 16+
11.30, 12.00, 12.30, 13.00, 13.30, 14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30 Т/с «УНИВЕР. НОВАЯ ОБЩАГА» 16+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Спорт площадки**
**6.35 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Ҫĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шӑнкӑрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 20 эрнекун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00 Новости
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15 «Про любовь» 16+
13.20, 14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.00 Вечерние новости
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 Концерт Максима Галкина
23.30 «Городские пижоны» «Бюро» 12+
0.35 Х/ф «У КАЖДОГО СВОЯ ЛОЖЬ» 16+
2.00 Х/ф «РОЛЛЕРЫ» 16+
4.05 «Модный приговор»

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «ВАСИЛИСА» 12+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 «Новогодний парад звёзд»
23.15 Х/ф «ПРОВЕРКА НА ЛЮБОВЬ» 12+
1.15 Х/ф «ОТДАМСЯ В ХОРОШИЕ РУКИ» 16+
3.25 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чӑваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00-9.55 Телеюрӑ**
**11.40-11.55 Вести-ПФО**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чӑваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05, 7.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 7.00, 8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Х/ф «БРАТАНЫ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.25 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.30 «ЧП. Расследование» 16+
20.00 «Правда Гурнова» 16+
21.15 Х/ф «ПЕРЕЛЕТНЫЕ ПТИЦЫ» 16+
1.05 «Место встречи» 16+
3.05 Т/с «ШЕРИФ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30 Т/с «ЖЕНСКАЯ ЛИГА: ПАРНИ, ДЕНЬГИ И ЛЮБОВЬ» 16+
8.00 «Экстрасенсы ведут расследование» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.30 «Дом-2. Свадьба на миллион» 16+
11.30 «Школа ремонта» 12+
12.30, 13.00, 13.30, 14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30 Т/с «УНИВЕР. НОВАЯ ОБЩАГА» 16+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чӑваш тĕнчи**
**6.35 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Юрӑ ҫаврӑмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ĕмĕр сакки сарлака**
**7.48-8.00 Кӑмӑлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Ҫĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Ӑраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 21 шӑматкун

### 1 КАНАЛ
5.25, 6.10 «Наедине со всеми» 16+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.30 Х/ф «ДВОЕ И ОДНА» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 Умницы и умники 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Ирина Аллегрова. «Не могу себя жалеть» 12+
11.20 Смак 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.15 «На 10 лет моложе» 16+
14.00 Т/с «АНГЕЛ В СЕРДЦЕ» 12+
18.00 Вечерние новости
18.10 Концерт Кристины Орбакайте
20.00 «Кто хочет стать миллионером?»
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Подмосковные вечера» 16+
23.55 Х/ф «ПОСЛЕДНИЙ КОРОЛЬ ШОТЛАНДИИ» 16+
2.15 Х/ф «ДВАДЦАТИПЯТИБОРЬЕ» 16+
3.45 Модный приговор
4.45 Контрольная закупка

### РОССИЯ 1
5.15 Х/ф «ЛЮБОВНИКИ» 12+
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.20 Вести. Местное время
8.20 Россия. Местное время 12+
9.20 «Сто к одному»
10.10 «Семейный альбом» 12+
11.00, 14.00 Вести
11.40 «Юмор! Юмор! Юмор!!!» 16+
14.20 Х/ф «ДОЛГИ СОВЕСТИ» 12+
18.00 Субботний вечер
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «ОДИНОЧЕСТВО» 12+
0.50 Х/ф «РОДНОЙ ЧЕЛОВЕК» 12+
2.50 Т/с «МАРШ ТУРЕЦКОГО» 12+

### ЧТВ
**8.00-8.20 Вести-Чӑваш ен**
**8.20-9.20 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**11.20-11.40 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00 Их нравы 0+
5.40 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «ЧП. Расследование» 16+
8.50 «Устами младенца» 0+
9.35 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Еда живая и мёртвая» Научно-популярный цикл Сергея Малозёмова 12+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.05 «Двойные стандарты» 16+
14.10 «Поедем, поедим!» 0+
15.05 Своя игра 0+
16.20 «Однажды...» 16+
17.00 «Секрет на миллион» Надежда Грановская 16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 Ты не поверишь! 16+
21.00 Х/ф «МОЯ РЕВОЛЮЦИЯ» 16+
23.00 «Международная пилорама» с Тиграном Кеосаяном 16+
0.00 «Борис Краснов. Без прикрас» 12+
1.05 Т/с «ИЗ ЖИЗНИ КАПИТАНА ЧЕРНЯЕВА» 16+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрӑ ҫаврӑмĕ**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Килте пĕҫерер-ха**
**12.34-13.00 Эсир юратнӑ юрӑ-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрӑ пултӑр парне. Тӳрĕ эфир**

## 22 вырсарникун

### 1 КАНАЛ
5.25, 6.10 «Наедине со всеми» 16+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.25 Х/ф «НАСТЯ»
8.10 «Смешарики. ПИН-код»
8.25 «Часовой» 12+
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.20 «Открытие Китая»
12.50 «Теория заговора» 16+
13.50 «Галина Польских. По семейным обстоятельствам»
14.55 Х/ф «БЕЛЫЕ РОСЫ» 12+
16.35 Эдвард Радзинский. «Царство женщин»
18.50 «Точь-в-точь» Финал 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Точь-в-точь» 16+
23.20 Х/ф «ВОССТАНИЕ ПЛАНЕТЫ ОБЕЗЬЯН» 16+
1.15 Х/ф «КВИНТЕТ» 16+
3.30 Модный приговор
4.30 Контрольная закупка

### РОССИЯ 1
5.00 Х/ф «ТОЛЬКО ТЫ» 12+
7.00 Мульт-утро. «Маша и Медведь»
7.30 «Сам себе режиссёр»
8.20, 4.25 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.20 «Смеяться разрешается»
14.20 Х/ф «ВРЕМЯ СОБИРАТЬ» 12+
16.15 Х/ф «НЕЛЮБИМАЯ» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
0.30 К 80-летию. «Шаймиев. В поисках Тартарии» 12+
1.25 Т/с «ЖЕНЩИНЫ НА ГРАНИ» 12+
3.25 Т/с «БЕЗ СЛЕДА» 12+

### ЧТВ
**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ
5.00 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
7.00 «Центральное телевидение»
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «Счастливое утро» 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.05 «Чудо техники» 12+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.05 «НашПотребНадзор» 16+
14.10 «Тоже люди» Александр Васильев 16+
15.05 Своя игра 0+
16.20 Следствие вели... 16+
18.00 «Новые русские сенсации» 16+
19.00 «Итоги недели» с Ирадой Зейналовой
20.30 Х/ф «УБИТЬ ДВАЖДЫ» 16+
0.30 Т/с «ИЗ ЖИЗНИ КАПИТАНА ЧЕРНЯЕВА» 16+
2.30 «Поедем, поедим!» 0+
3.00 Т/с «ШЕРИФ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30, 8.00, 8.30 Т/с «ТНТ. MIX» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.00 «Дом-2. Свадьба на миллион» 16+
11.00 Т/с «ПЕРЕЗАГРУЗКА» 16+
12.00 Т/с «ИМПРОВИЗАЦИЯ» 16+
13.00, 21.00 «Однажды в России» 16+

### ЧӐВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Ĕҫ ҫынни**
**7.45 Ҫапла пулнӑ**
**7.55-8.00 Юрӑ ҫаврӑмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри — мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтӑн ҫӳҫерен**

# Добавки скотине, а польза для нас




Многие хозяева применяют кормовые добавки «Здравур». Они повышают продуктивность скота и птицы, укрепляют их здоровье, улучшают использование обычных кормов. Однако не всем известно, что благодаря добавкам «Здравур» получаемые на подворье яйца, молоко и мясо становятся вкуснее и полезнее для нашего здоровья. Это действительно так. Во-первых, здоровые животные дают здоровую продукцию. Во-вторых, благодаря лучшему балансу питательных веществ в рационе получаемая продукция более полноценна в диетическом отношении. В-третьих, научные исследования подтвердили, что благодаря витаминно-минеральным премиксам повышается содержание в яйцах, молоке и мясе легкоусвояемых витаминов и микроэлементов (в т.ч. вит. А, Е, группы В, цинка, йода и др.). При этом добавки «Здравур» не содержат антибиотиков, гормонов, ГМО, химических стимуляторов роста.

*На правах рекламы.*

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов** маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. Т. 8-906-380-86-28.

**38.ЧИСТКА колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 8-967-471-50-70.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8/8352/ 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, **кольца** колодезные, замковые, качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**55.ТАМАДА – юбилеи, свадьбы.** Антонина и Петр Красновы. Т. 8-902-328-05-67.

**57.Мила ТАМАДА** – видео, фотосъемка; "Уяв". **Т. 89373756378.**

**59.Услуги КАМАЗа-манипулятора, автовышки** 16 м /стрела 6 т/. Т. 8-903-379-52-58.

**189.Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

**346.ЛЕЧЕНИЕ АЛКОГОЛИЗМА.** Анонимно. **Т.: 67-08-17, 8-962-321-88-33.** *Лиц. ЛО21-01-001557 от 10.10.2016 г. МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**797. Юрист канашĕ** – пенси, ĕçлев, çемье ыйтăвĕсем. Т. 37-28-74.

**801.СУХАЯ ЧИСТКА, изготовление, переделка** подушек, перин, пуховых одеял и матрацев /с простегиванием вдоль и квадратами, любых форм и размеров/. Работы выполняются около дома заказчика. Выезд в любой населенный пункт – бесплатно. Т.: 8-927-990-47-24, 8-927-990-47-25.

**811.Замена электропроводки** частного дома, квартиры. Материал – бесплатно. Т. 89370153540.

**812.Фото, видеосъемка.** Т. 8-917-676-35-24, Александр.

## ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50.Коров, тёлок.** Т. 8-927-850-85-64.

**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05. Звоните!

**817.Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**818.Бычков, телок, коров, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
НА 3, 6, 7 ЭТАЖАХ
Дома печати.
Справки по телефонам:
28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

## Усăллă канашсем

### Тарпа вараланнă япалана тасатма



● Тарпа вараланнă çи-пуçа аспиринпа тасатма пулать. Çур стакан шывра икĕ таблетка аспирин ирĕлтермелле. Вараланнă вырăна çак шывра ик-виç сехет ислетсе лартмалла. Унтан япалана яланхи пекех çумалла. Тарпа вараланнă тĕлсем çухалĕç. Çакна палăртмалла: япалана хамăр çĕршывра туса кăларнă аспирин кăна тасатать. Ют çĕршыврисен тытăмĕ урăхларах.

● Тарпа вараланнă лаптăка çăвас умĕн 9% уксус шĕвекĕнче 20-30 минут тытмалла. Унтан яланхи пекех çумалла. Япала лайăх тасалĕ.

● Шур эрехе /водкăна/ пĕр литр шыва 100 грамм яратпăр та унта тарпа вараланнă япалана ислетсе лартатпăр. Пĕр-икĕ сехетрен ăна çăватпăр.

● Тăвар та тарлă тĕлсене пĕтерме пулăшать. Ку меслет йĕтĕне, кампире, пурçăна лайăх тасатать. 2 апат кашăкĕ тăвара çур литр шывра ирĕлтермелле, унта вараланчăк япалана хурса ислетмелле. Икĕ-виçĕ сехетрен çумалла.

● Апат соди. Чĕрĕк стакан шыва 3-4 апат кашăкĕ сода ярса пăтрататпăр. Пулнă «пăтăпа» сарăхнă тĕлсене сĕрсе хуратпăр. Пĕр-икĕ сехете хăваратпăр, унтан çăватпăр.

### Атă вăчăри вансан

Атă вăчăрин чупакан механизмĕ вансан ăна улăштармалла. Атă-пушмак юсакан мастерской çывăхра пулсан унта пама пулать-ха. Анчах çак ĕçшĕн тăкакланма тивет. Тĕрĕссипе, ăна улăштарасси пит кăткăсах та мар, мелне çеç пĕлмелле.

Икĕ меслет палăртмалла. Юсав мастерскойĕсенче те çавсемпех усă кураççĕ.

1. Бегунока атăн вăчăрин аялти вĕçĕнчен кĕртмелле. Кун пек чухне атăн аялти пайĕнчи çĕвве сӳтмелле. Вăчăрасене тĕлме-тĕл тытса бегунока лартмалла, хăпартмалла, çĕвве çĕнĕрен çĕлесе хумалла.

2. Бегунока сӳлтен кĕртес тесен ăна кăштах отвертка вĕçĕпе е çĕçĕ вĕçĕпе хирсе анлăлатмалла. Вăчăран чаркăч кăшăлĕсене кăлармалла, механизма лартмалла, асăрханса антармалла. Чи аяла çитсен бегунока каялла хĕстермелле. Ку меслет бегунока кăштах вăйсăрлатать, анчах çăмăлрах. Вăчăра лайăх ĕçлесессĕн чаркăч кăшăлĕсене каялла лартса хĕстермелле.

## СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**1.Большой ассортимент** качественной фабричной **МЕБЕЛИ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; «Северная ярмарка». Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.
**Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС, щебень, кирпич, **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. **Т. 89603016374.**

**7.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит. Скидки. Т. 89276689713.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

**13.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича, **керамзит.** Доставка. Т. 8-903-322-57-66.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**15.Кирпич любой.** Т. 8-961-339-33-63.

**16.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, уголь – недорого. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.КИРПИЧ** М100, М125, М150; **БЛОКИ керамзитобетонные.** Доставка. Тел. 8-903-322-02-08.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.

**27.КВАРТИРЫ ОТ ЗАСТРОЙЩИКА** в кирпичном доме в НЮР г.Чебоксары по низким ценам /без посредников/. Ипотека - Россельхозбанк, Сбербанк, ВТБ 24. Тел.: 89276670119, 8/8352/ 38-31-54.

**31.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, срубы, дрова, горбыль. Т. 89033891400.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**53.Бензинпа ĕçлекен** "ELITECH" **генератор.** Т. 89033581361.

**54.Бычков** от 3-х недель **по 8000 руб.** Доставка. Т.: 8-903-359-79-62, 8-919-669-01-71.

**56.Пĕтĕ КАЧАКА** – шурă тĕслĕ, мăйракаллă. Т. 8-919-660-51-11.

**58.КИРПИЧИ** от 9 руб., **керамблоки** от 31 руб., фундаментные блоки, **кольца колодезные,** керамзит в мешках, плиты перекрытия, цемент и сухие смеси. Услуги манипулятора. Т. 8-903-379-52-58.

**61.СРУБЫ, строительство** домов, бань "под ключ". Т. 89276670355.

**62.Блоки КБ** от 30 руб., **цемент,** доски обрезные от 5500 руб., **песок,** ОПГС, **кирпич.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 89033222532.

**76.Срубы** с комплектацией. Липовые срубы, **каркасные дома** на заказ. Д-ка. Т. 89379528467.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**98.Бетон,** раствор, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, крышки для погреба, доски. Д-ка. Дёшево. Т. 89278535732.

**173.ДОИЛЬНЫЕ АППАРАТЫ** – 19500 руб. Т. 8-905-341-96-00.

**214.КЕРАМБЛОКИ** /40х20х20,40х12х20,40х9х20/ пропаренные, вибропрессованные – недорого. **Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.

**610. Отруби** – 7 р., **пшеницу** – 9,5 р., **ячмень** – 9 р. Т. 89373916016.

**792.Овес,** пшеницу, **ячмень,** отруби, **комбикорма. Доставка.** Тел. 8-917-667-33-35.

**796.СРУБЫ** /хвоя/. Т. 89876756874.

**821.БЫЧКОВ** возрастом от 10 дней и 3-х месяцев, породы "Холмогоры" и "Голштино фризы". **Доставка – бесплатно.** Т. 8-903-320-27-47.

## ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

49 çулти ялта пурăнакан арçын ялта пурăнма килĕштерекен хĕрарăмпа çемье çавăрасшăн. Ача пурри – чăрмав мар. Т. 8-987-678-23-49.

ХЫПАР
ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ
4 627126 799883

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ
Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан
Д.А.МОИСЕЕВ
Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
56-15-30, 56-00-67.
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70, 62-50-08
56-20-07 – инспекторсем.
Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта:
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

11.01.2017. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 11306. Заказ 49.